28-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1945
МАЙ
23
ЮНКУН
98(1849) №

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ
ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН,
ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН
ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА
СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Комбайнсене хăвăртрах та лайăхрах юсар

Республикăри çĕршер колхозсем çуракине ăнăçлăн вĕçлесе пыраççĕ. МТС-сенчи трактористсемпе трактористкăсем те колхоз хирĕсенче хĕрӳллĕн ĕçлеççĕ. Малта пыракансемпе пĕрлех, иртнĕ çулсенче кая юлса пынă Чкаловски, Канаш, Вăрнар, Калинино тата ытти хăшпĕр МТС-сем те çураки вăхăтĕнче тракторсемпе ĕçлемелли плана ăнăçлăн тултарни çинчен пĕлтереççĕ. МТС-сен çитĕнĕвĕ, чăн малтанах, çуракине пур енчен те тĕплĕн хатĕрленнинчен, тракторсемпе вĕсенчен кăкарса ĕçлемелли машинăсене вăхăтра тата лайăх юсаннинчен килнĕ. Çак тĕслĕхсем вĕсем ĕçе лайăх хатĕрленсен, ответлăха туйса ĕçлесен, кирек хăш МТС-та пысăк çитĕнӳсем тума пултарни çинчен калаççĕ.

Вăхăтра тата лайăх акнă тырăсем шăтса тухрĕç, халĕ ĕнтĕ вĕсене кулленхи пăхса çитĕнтерес тата ытти уйхир ĕçĕсем пуçланаççĕ. Уйрăмăнах хальхи вăхăтра тырпулсене пухса кĕртме хатĕрленесси МТС-сем умне пысăк задача кăларса тăратать. Вĕсем хăйсен машинисене, пуринчен малтан комбайнсемпе молотилкăсене юсас ĕçе тытăнмалла.

Тырпулсене пухса кĕртме тытăнатчен вăхăт пур-ха, ĕлкĕрĕпĕр-ха, тесе лăпланса ларни киревсĕр ĕç пулса тăрать. Иртнĕ çул комбайнсене вăхăтра юсаманнине пула, республикăра 32 комбайн ĕçе хутшăнайман. Çак комбайнсене вăхăтра юсаса усă курнă пулсан, 3.500 гектар ытла тырă вырса пухма пулнă. Пăрачкав МТС-ĕнче 6 комбайн, Чкаловски МТС-ĕнче 4 комбайн, Тăвай МТС-ĕнче 3 комбайн, начар юсанă пирки, йĕркеллĕ ĕçлеймен, вĕсенчен хăшпĕрисем ĕçе те тухайман.

Кăçал пирĕн колхозсен уйхирĕнче 345 комбайн ĕçлемелле. Вĕсем 40.000 гектар ытла вырса пухмалла. Вĕсене юсас тĕлĕшпе 1944 çулхи декабрĕн 15-мĕшĕнчех Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕ МТС-сене кашни уйăх валли уйрăм задани-график панăччĕ.

Анчах та çав паха постановленине чылай МТС-сем кирлĕ пек пурнăçласа пымаççĕ-ха. Майăн 25-мĕшĕ тĕлне пирĕн республикăри МТС-сем 51 комбайн, 38 сложнăй молотилка юсамалла. Вăрнар, Шăхасан, Красноармейски МТС-семсĕр пуçне, ытти МТС-сем хăйсен графикне тултарса пымаççĕ. Нумай МТС-сенче комбайнсене юсама тытăнман та. Чылай МТС-сен комбайнĕсемпе молотилкисем çак вăхăта çитсе те колхозсенчех лараççĕ. Шăмăршă МТС-сĕн 5 комбайнĕ колхозсенче ларать. Кунта хăш комбайна мĕнле юсамаллине тата мĕнле пай кирлине те пĕлмеççĕ. Çакăн пек тĕслĕхсем Октябрьски, Тăвай, Канаш тата ытти хăшпĕр МТС-сенче те пур. Комбайнсемпе молотилкăсене халех МТС картишне, мастерской çывăхне илсе пымалла. Вĕсене кирлĕ пек тасатса, хăш пайне юсамаллине тĕрĕслемелле, мĕнле пайсем çĕнĕрен кирлине палăртса хумалла.

Комбайнерсемпе вĕсен помощникĕсене халĕ трактор бригадисенчен чĕнсе илмелле. Вĕсем çителĕксĕр пулсан, МТС-сенче комбайнсене юсас ĕçе трактор бригадирĕсемпе бригадир помощникĕсене явăçтармалла. Колхозсенче тĕрлĕ сăлтавсене пула тракторсемпе ĕçлемен опытлă трактористсене те комбайнсене юсас ĕçе хутшăнтармалла. Кашни комбайна тата молотилкăна юсама комбайнерпа машиниста çирĕплетмелле, унпа пĕрлех трактор бригадин бригадирĕ çине те ответлăх хумалла. Тĕпрен юсамалли комбайнсене, чăн малтан тытăнмалла. МТС директорĕсен комбайнсемпе молотилкăсене юсамалли кашни кунхи ĕç планне тумалла. Кашни ĕçех уйрăм сдельщинăпа тăвассине организацилемелле. Бригадăсене кăна мар, уйрăм рабочисене те кулленех заданисем памалла, вăл заданисене пурнăçланине ялан тĕрĕслесе тăмалла.

Ремонтра ĕçлекен комбайнерсемпе рабочисен чăн малтанах юсав ĕçĕн пахалăхĕ çине тимлĕн çаврăнса пăхмалла. МТС директорĕсемпе старши механиксен юсав ĕçĕнчи кашни çитменлĕхе е кăлтăка вăхăтра тупса тӳрлетмелле. Юсав ĕçне хăвăртрах та лайăхрах туса пымалла. Юсав ĕçĕн пахалăхне ялан тĕрĕслесе тăма кашни МТС-рах пысăк опытлă комбайнера хумалла. Комбайнăн е молотилкăн юсанă кашни пайне контролер-механик йышăнсан кăна кирлĕ вырăна лартмалла — hidden

Комбайнсене юсас ĕçре тракторсене юсанă чухнехи ĕç опытне анлăн сармалла. Кирлĕ пайсене вырăнтах тума тăрăшмалла, кивĕ пайсене юсаса çĕнетмелле. Кашни МТС республикăри предприятисемпе запаслă пайсем хатĕрлес тĕлĕшпе халех калаçса татăлма тивĕçлĕ. Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн запаслă пайсемпе детальсене МТС-сене тĕрĕс валеçсе пама, вĕсене хăвăртрах вырăна çитерме тăрăшмалла.

Машинно-тракторнăй станцисен директорĕсем, партипе совет тата çĕрĕç органĕсем комбайнсемпе молотилкăсене юсанă çĕрте ĕçлекенсен ĕç условийĕсене лайăхлатма кирлĕ мероприятисене пĕтĕмпех тумалла. Кашни МТС-рах йĕрлешӳллĕ столовăй, канмалли вырăнсем, пурăнмалли общежитисем лайăх пулмалла. Комбайнсене юсанă вăхăтра комбайн çумĕнчи тырă пушатмалли площадкăсене хатĕрлемелле, выртнă тырра, вире, хуратула, вăрлăхлăх курăксене пухма май паракан тĕрлĕ оборудованисене хатĕрлесе хумалла.

Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ комбайнсене юсас ĕç мĕнле пынине тĕрĕслесе тăни, тивĕçлипе ертсе пыни çук-ха. Вăл кăна та мар, кашни вунă кун хушшинче миçе комбайн тата миçе молотилка юсамаллине кăтартакан графика та туса пĕтерсе МТС-сем патне çитермен. Паллах, çакăн пек çаврăнăçусăрлăх ĕçре пысăк сиен кӳме пултарать. Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ комбайнсене юсас ĕçе конкретлăн ертсе пыни, МТС-сене вăхăтра пулăшса пыни кирлĕ.

Кăçал июнĕн 24-мĕшĕнче пирĕн республика 25 çул тултарать. Уяв ячĕпе пур çĕрте те социализмлă ăмăрту анлăн сарăлса пырать. Парти, совет тата комсомол организацийĕсен çак ăмăртăва комбайнсемпе молотилкăсене юсанă çĕрте ĕçлекенсене те явăçтармалла.

РЕСПУБЛИКĂРИ КОЛХОЗСЕНЧЕ 1945 ÇУЛХИ МАЙĂН 20-мĕшĕ ТĔЛНЕ ÇУРАКИ МĔНЛЕ ПЫНИНЕ КĂТАРТАКАН

СВОДКА

(процентпа)

Районсем	Пĕтĕмпе акнă	Çав шутран	
		Тĕштырăпа пăрçа йышши тырăсем	Çĕрулми лартнă
Вăрнар	100,2	108,9	85,6
Сĕнтĕр	97,1	103,4	71,2
Шăхасан	93,9	98,5	62,1
Красноар-ски	92,6	100,7	89,3
Муркаш	91,9	100,8	18,5
Çĕрпӳ	90,0	109,4	59,6
Ишлей	87,7	100,9	47,1
Шупашкар	87,4	101,6	33,6
Чурачăк	87,0	95,4	18,6
Канаш	86,5	100,5	14,6
Елчĕк	85,6	95,4	25,3
Советски	85,5	100,0	60,2
Вăрмар	85,5	100,0	24,0
Октябрьски	84,3	100,0	15,1
Сĕнтĕрвăрри	83,8	102,3	23,8
Элĕк	83,7	99,9	4,5
Куславкка	82,6	96,2	16,1
Калинино	82,3	113,1	11,2
Шăмăршă	79,9	73,7	—
Тăвай	79,3	90,5	60,7
Етĕрне	78,7	92,9	39,0
Чкаловски	78,5	85,7	14,8
Комсомольски	74,1	81,9	6,2
Хĕрлĕ Чутай	70,8	80,7	2,7
Йĕпреç	63,8	76,5	2,2
Первомайски	61,7	70,0	6,6
Çĕмĕрле	61,2	94,7	2,2
Улатăр	58,9	72,3	0,2
Пăрачкав	56,5	59,8	8,5
Кувакино	50,8	58,1	0,6

РЕСПУБЛИКĂРИ КОЛХОЗСЕНЧЕ МАЙĂН 20-мĕшĕ ТĔЛНЕ ФЕРМА ÇУМĔНЧИ УЧАСТОКСЕНЕ АКАС ĔÇ МĔНЛЕ ПЫНИНЕ КĂТАРТАКАН

СВОДКА

Районсем	Плана тултарнă (процентпа)
Вăрмар	121,8
Шăмăршă	58,0
Пăрачкав	52,1
Çĕмĕрле	51,5
Шупашкар	44,7
Чкаловски	42,2
Шăхасан	41,6
Çĕрпӳ	36,8
Калинино	35,3
Тăвай	34,2
Елчĕк	32,8
Чурачăк	31,8
Кувакино	31,6
Ишлей	30,6
Красноармейски	30,4
Канаш	29,0
Йĕпреç	27,0
Сĕнтĕр	25,8
Хĕрлĕ Чутай	22,8
Етĕрне	22,0
Улатăр	21,1
Элĕк	18,0
Вăрнар	16,5
Сĕнтĕрвăрри	16,0
Советски	14,3
Муркаш	14,2
Первомайски	12,5
Куславкка	8,7
Октябрьски	7,3
Комсомольски	6,0

Республика уявне хатĕрленсе

КӲКЕÇ. Апашри вăтам шкулта вĕренекенсем Чăваш автономийĕ 25 çул тултарнă уява тăрăшса хатĕрленеççĕ. Ку тĕлĕшпе шкулта вĕренекенсен пухăвне ирттернĕ. Унта юбилея хатĕрленсе мĕн тумалли çинчен тĕплĕн сӳтсе-явнă. Чи малтанах шкул участокĕ çинче сад пахчи тума палăртнă. Ку тĕлĕшпе халĕ хĕрӳ ĕçсем пыраççĕ.

А. ЕГОРОВА.

Вулав çурчĕсем лайăх ĕçлеççĕ

МУРКАШ. Çураки ĕçĕсем вĕçленсе пыраççĕ. Çак ĕçсене кĕске вăхăтра тата лайăх ирттерес тĕлĕшпе вулав çурчĕсем те начар мар ĕçлеççĕ. Акă, Ярапайкасси ял Советĕнчи вулав çурчĕ çураки вăхăтĕнче хăйĕн ĕçне тĕпренех çĕнетсе улăштарчĕ. Унта агитаторсемпе вулавçăсене бригадăсемпе звеносем çумне çирĕплетнĕ. Вĕсем кашни кунах хирте пулаççĕ. Вулав çурчĕн заведующийĕ Н. Тимакова юлташ хирте ĕçлекенсем патĕнче 20 калаçу ытла ирттернĕ. Кунта стена хаçачĕсемпе боевой листоксем те вăхăтра тухса тăраççĕ.

Çавăн пекех Орининăри вулав çурчĕ те лайăх ĕçлет. Кунти агитколлектива Виноградова юлташ ертсе пырать.

Халĕ вулав çурчĕсем Чăваш Республики 25 çул тултарнине кĕтсе илме хатĕрленеççĕ. Çав майпа колхозниксемпе колхозницăсем хушшинче ăнлантару ĕçне нумай лайăхлатрĕç. Вулав çурчĕсем çумĕнче художествăллă пултарулăх кружокĕсем ĕçлеме тытăнчĕç.

И. ГРИГОРЬЕВ.

Ĕçсынни депутачĕсен райсовечĕсен исполкомĕсемпе ВКП(б) райкомĕсем тăратнă тăрăх, çуракинче тухăçлăн тата лайăх ĕçленĕшĕн малта пыракан çак колхозсене республикăри Хисеп хăми çине кĕртнĕ:

МУРКАШ РАЙОНĔ ТĂРĂХ

32. Маленков ячĕпе тăракан колхоз (председателĕ Васильев юлташ). Тĕштырăсене 7 ĕç кунĕнче акса пĕтернĕ. Агротехника енчен лайăх пахалăхпа акнă.

33. «Аврора» колхоз (председателĕ Казамбаев юлташ, комсомолăн пуçламĕш организаци секретарĕ Кузьмина юлташ). Колхоз 118 гектар тĕштырăсене, агротехника енчен лайăх пахалăхпа 9 ĕç кунĕнче акса пĕтернĕ.

СĔНТĔРВĂРРИ РАЙОНĔ ТĂРĂХ:

34. «Красная Армия» колхоз (председателĕ Е. П. Анкудинов). Колхоз тĕштырăсене лайăх пахалăхпа 10 ĕç кунĕнче акса пĕтернĕ. Çĕрĕн пĕтĕм лаптăкне яровизациленĕ вăрлăхпа тата ретĕн-ретĕн акнă.

35. «Пищевик» колхоз (председателĕ Ядров юлташ). Колхоз 100 гектар тĕштырăсене лайăх пахалăхпа 11 ĕç кунĕнче акса пĕтернĕ. Çĕрĕн пĕтĕм лаптăкне яровизациленĕ вăрлăхпа тата ретĕн-ретĕн акнă.

Сĕнтĕр районĕ çураки планне тултарнă

СĔНТĔР. (Телефонпа). Районри колхозсем майăн 22-мĕшĕ тĕлне çураки планне пĕтĕмпех тултарчĕç. План тăрăх 12.268 гектар акмалла пулсан, 12. 283 гектар акнă. Акас ĕç малалла пырать.

ВКП(б) райкомĕн секретарĕ Я. ПЕТРОВ.
Райисполком председателĕ И. СВЕШНИКОВ.

Калинино тата Чкаловски МТС-ĕсем çураки планне тултарнă

Калинино МТС-ĕ майăн 19-мĕшĕ тĕлне çуркунне тракторсемпе тумалли ĕçсен планне 102,3 процент тултарса. 2,5 тонна горючи перекетленĕ. План тăрăх 2502 гектар сухалас вырăнне 2620 гектар сухаланă. 10-мĕш бригада (бригадирĕ Трофимов юлташ) хăйĕн планне 177 процент, 1-мĕш бригада (бригадирĕ Вазанов юлташ)—133 процент тултарнă. А. Стаканова трактористка 44 гектар вырăнне 91 гектар сухаласа, нормăна 206 процент тултарнă, 215 килограмм горючи перекетленĕ. Çавăн пекех М. Микушкина трактористка та 44 гектар вырăнне 91 гектар сухаласа нормăна 206 процент тултарнă.

Чкаловски МТС та майăн 19-мĕшĕ тĕлне 5.800 гектар вырăнне 5.826 гектар сухаласа çуркунне тракторсемпе тумалли ĕçсен планне 100,4 процент тултарнă. Пыркин юлташ ертсе пыракан 9-мĕш бригада урапаллă тракторпа 90 гектар вырăнне 200 гектар сухаланă. МТС-ри 9 бригада хăйсен планне ирттерсе тултарнă, пурĕ 9 тоннăна яхăн горючи перекетленĕ.

Çĕртме тума тытăннă

ЧУРАЧĂК. майăн 22-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри колхозсем тĕштырăсем акса пĕтерчĕç. Халĕ кая юлса акакан тырăсене акаççĕ, çĕрулми лартаççĕ. Паянхи кун тĕлне районĕпе 186 гектар çĕрулми лартнă, 108 гектар вир акнă. «Новая сила», «Прогресс». «Красный флот», «Шумажар» тата ытти хăшпĕр колхозсем те çуракине пĕтĕмпех вĕçлерĕç.

Пур колхозсенче те ферма çумĕнчи участоксене акаççĕ. План тăрăх 320 гектар акмалла, паянхи куна 102 гектар тымар çимĕç, утăлăх викăпа сĕлĕ акнă.

«Шумажар» колхоз çуракине вĕçлесе, ирхи çĕртме тума тытăнчĕ. Ирхи çĕртме кунта 20 гектар ытла сухаланă. Çак участока пĕтĕм лаптăкĕпех тислĕк тăкса çемçетнĕ.

Уйрăм колхозсем çуркунне калчасене кирлĕ пек пăхманнине пула, халĕ калчасем пĕтнĕ вырăнсене пăсса суртыррисем акаççĕ. Çакăн пек тĕслĕхсем вĕсем агротехникăна хирте тĕрĕс пурнăçа кĕртсе пыма кирли çинчен асăрхаттараççĕ.

Ф. АНИФЕРОВ,
Районри çĕрĕç пайĕн агрономĕ.

14 КОЛХОЗ ÇĔРУЛМИ ЛАРТСА ПĔТЕРНĔ

МУРКАШ, майăн 21-мĕшĕ. (Телефонпа). Колхозсем пĕрчĕллĕ тырăсене акса пĕтерсенех çĕрулми лартма тытăнчĕç. Районĕпе 1.000 гектар çĕрулми, 80 гектар пахча-çимĕç лартмалла. Паянхи куна 14 колхоз çĕрулми лартса пĕтернĕ. Уйрăмăнах Муркаш, Çатракасси, Оринино, Кашмаш, Хăймалакасси ял Совечĕсенчи колхозсенче çĕрулми лартас ĕç ăнăçлăн пырать. Çатракассинчи «Пионер» колхоз иртнĕ çул кашни гектартан 170 центнер çĕрулми пухса илчĕ. Кăçал унтан ытларах туса илес тесе, çĕрулми лартмалли вырăна кĕлпе, кайăк-кĕшĕк тислĕкĕпе çемçетеççĕ. Кунта 6 гектар çĕрулми, 0,5 гектар пахча-çимĕç тата 2 гектар кантăр акнă. Ферма çумĕнчи участока пурĕ 6 гектар кăшман тата ытти тымар-çимĕçсемпе клевер акнă.

Кашмашри «Свобода» колхозра юлашки вăхăра ĕç хăвăртлăхĕ чылай ӳсрĕ. Кунта план тăрăх 36 гектар çĕрулми лартмалла, паянхи куна 20 гектар лартнă. Çак колхозра Бычкова юлташ ертсе пыракан бригада малта пырать. Вăл çуркуннехи ĕçсене йăлтах вĕçленĕ.

Ф. МАЛЫШКИН.

Йĕпреç районĕнчи колхозсем мĕншĕн юлса пыраççĕ

Йĕпреç районĕнчи чылай колхозсем ялхуçалăх ĕçĕнче юлса пыраççĕ. «Строитель», «Победа», «Красный водник», Калинин, Молотов ячĕпе тăракан колхозсем çулран çулах юлса пыраççĕ. Юлса пынин сăлтавĕ кунта—ялхуçалăх ĕçĕсене тума пур колхозниксене те явăçтарманнинчен килет.

«Строитель» колхозра иртнĕ çул 14 вăйпитти колхозник ĕçкунĕсен минимумне тултарман, вĕсемех кăçал та ĕçе тухмаççĕ.

«Победа» колхозра та 11 çын ĕçкунĕсен минимумне тултарман. Кунта ĕçлеме пултаракансем 100 çын ытла, анчах та колхоз ĕçне пурĕ те 27 çын кăна хутшăннă. Уйра çамрăксем суха тунă вăхăтра ĕçлеме пултаракан вăйпитти çынсем килте лараççĕ. Иван Наумов вăтам çулти колхозник, анчах колхоз ĕçне вăл пĕр сăлтавсăрах хутшăнмасть. Колхоз правленийĕ ăна, «кутăн çын» вырăнне хурса, чи çăмăл ĕçе—тракторсене хураллама ярать, анчах вăл унтан та тарса тăвранать. Колхоз ĕçне чăрмантаракан çакăн пек «кутăнсем» татах та пур. Мĕншĕн «кутăнланаççĕ-ха» çак кахалсем? Кунта та сăлтавĕ аякрах мар. Н. Спиридонова, В. Павлова колхозницăсен кил вырăнĕсем пысăк пирки, вĕсем колхозра ĕçлес вырăнне темиçе çул хушши ĕнтĕ (хăйсен пахчинче «тар юхтараççĕ». Наумов та çавсем пекех. Вĕсем колхоз çĕрĕ çине хăйсем валли çĕрулми, тырпул акса тăваççĕ. Çак колхозри 2-мĕш бригадăра 4 хуçалăх пĕрер ĕне, иртнĕ çулхипе кăçалхи пăрусем усраççĕ. Пăрусене ӳстереççĕ те колхоза тырăлла сутаççĕ.

«Строитель» колхозри завхозăн пĕр ĕне, икĕ пушмак пăру пур. «Строитель» колхозри хăшпĕр колхозниксем утă çулнă вăхăтра колхозра ĕçлемен, вăрманта хăйсене валли утă çулса хатĕрленĕ. Акă И. Сорокин колхозник та колхозра «кутăн çын» шутĕнче тăрать. Мĕн тума ĕçлемест-ха Сорокин? Мĕншĕн тесен иртнĕ çул вăл государство çĕрĕ çинчен хăйне валли ытлашшипех утă пухса кĕнĕ. Вăл утта вара ытти районсенчен вăрман хатĕрлеме килнĕ колхозсене хĕлле укçалла та, тырăлла та сутнă. Утă сутса кăна вăл 20 пăт ытла тырă илнĕ. Çакăн пек тĕслĕхсем «Строитель» колхозра татах та сахал мар.

Колхоз правленийĕсем, районри çĕрĕç пайĕ çак тĕслĕхсене лайăх пĕлеççĕ, çак сăлтавсем пирки уйрăм колхозниксем ĕçе тухманни райисполкома та, ВКП(б) райкомне те паллă. Анчах çак организацисем ун пек тĕслĕхсене те, уйрăм колхозсем кая юлса пынине те хăнăхнă пулас. Айăплисене, колхоз ĕçне юхăнтаракансене, çемçе кăмăллă председательсене ответ тыттарас вырăнне: нимĕн те тума çук, юлатпăр çав, тесе лăпланса лараççĕ.

Колхозсем юлса пыни пĕтĕмпех колхозăн шалти пурнăçне организацилеме пĕлменнинчен, колхозпа колхозникăн интересне пĕтĕçтерсе пыма пĕлменнинчен тата конкретлă ертсе пыманнинчен килет. Йĕпреç районĕнчи руководителĕсен çакна ăнланса илме вăхăт çитнĕ пулас ĕнтĕ.

П. КУРАКОВ.

Сĕнтерӳ ялавне Мускава ăсатмашкăн хисеплĕн пани

Ĕнер Берлинра питĕ паллă ĕç пулчĕ: пирĕн салтаксем хаяр çапăçусем витĕр илсе тухса Германи столицинче рейхстаг çурчĕ çине çĕклесе лартнă Сĕнтерӳ ялавне Мускава ăсатма хисеплĕн пачĕç.

Мухтавлă самант пуçланиччен чылай малтан Бранденбург хапхи патне татти сыпписĕр машинăсем, мотоциклсемпе велосипедсем боецсемпе офицерсене илсе пычĕç. Пурте Паризерплапа. рейхстаг çурчĕ патне васкаççĕ. Кăнтăрла 3 сехетра уяв пулмалли вырăна Берлин хулин çар комендантĕ—Совет Союзĕн Геройĕ Берзарин генерал-полковник пычĕ. Йĕркеленсе тăнă чăçсемпе подразделенисем тăрăх «смирно» тесе панă команда янăраса кайрĕ. Фирсов генерал-майор Берзарин генерал-полковника — гарнизонри çарсен чăçĕсене Сĕнтерӳ ялавне Мускава ăсатнă май ирттермелли парада йĕркелесе тăратнă, тесе рапорт парать. Берзарин генерал-полковник подразделенисене пăхса тухать, Берлиншăн çапăçса чапа тухнă воинсене сывлăх сунать. Çак самантра Сĕнтерӳ ялавне рейхстаг çурчĕ çинчен илеççĕ те ун вырăнне çĕнĕ ялав тăратса лартаççĕ.

Совет Союзĕн государство гимнĕн кĕввипе утса пырса, пирĕн боецсемпе офицерсен ушкăнĕ Сĕнтерĕвĕн таса ялавне строй умĕпе йăтса тухаççĕ. Ку ушкăна Совет Союзĕн Геройĕ Виктор Бойченко лейтенант ертсе пырать.

Берзарин генерал-полковник хĕрлĕ ялава питĕ хисеплесе йышăнать. Хăйĕн кĕске сăмахĕнче вăл çапла калать:

— Гитлерла Германие эпир питĕ йывăр çапăçусенче çĕнтертĕмĕр. Эпир, хамăрăн Верховный Главнокомандующин Совет Союз Маршалĕн Сталин юлташăн приказне мухтавлăн пурнăçа кĕртсе, Сĕнтерӳ ялавне парăнтарнă Германин столицинче çĕклесе лартрăмăр.

Генерал-полковник пирĕн халăха, Хĕрлĕ Çара тата аслă Сталина сывлăх сунать.

Сĕнтерӳ ялавне панă хыççăн парад пулса иртрĕ. Берлин гарнизонĕнчи çарсен чăçĕсем, Берлина туртса илесшĕн çапăçнăскерсем, Паризерплац тăрăх чаплăн утса иртрĕç. Мотопехота хыççăн чечексемпе илемленнĕ танксем, артиллери иртрĕ.

А. АРНОЛЬДОВ.

Берлин, майăн 21-мĕшĕ. (ТАСС спецкорĕ).

ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Чăваш республикинчи суту-илӳпе хатĕрлев организацийĕсенчи, обществăллă апатлану системинчи, предприятисен подсобнăй хуçалăхĕсенчи рабочисене, служащисене тата ертсе пыракан работниксене Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотипе наградăласси çинчен

(Юлашки. Пуçламăшĕ «Чăваш Коммунин» 82, 91, 94, 95 тата 97-мĕш номерĕсенче).

82. Прокопий Федотович Федотова — Чăвашпотребсоюзăн Вăрмарти чăх-чĕп комбиначĕн холодильник заведующине.

83. Анна Федоровна Хорольскаяна — Военторгăн Шупашкарти отделенийĕн 1-мĕш номерлĕ столовăйĕн производство заведующине.

84. Татьяна Михайловна Хохловăна — Чăвашторгăн Улатăрти отделенийĕн 1-мĕш номерлĕ столовăйĕн официанткине.

85. Захар Алексеевич Хрусталева — Етĕрне районĕнчи Чурпайри ялпо председательне.

86. Михаил Семенович Чеботарева — Етĕрне райпотребсоюзĕн председательне.

87. Василий Иванович Чунаева—Çĕмĕрлери механизациленĕ вăрман пункчĕ çумĕнчи ОРС начальникне.

88. Фадей Степанович Цветкова—Чăвашторг директорне.

89. Антонина Васильевна Цыпаевăна—Чăвашторгăн Улатăрти отделенийĕн 9-мĕш номерлĕ магазинĕн заведующине.

90. Лидия Сергеевна Шапошниковăна —Чăвашпотребсоюз президиумĕн главнăй бухгалтерне.

91. Василий Никитич Шарапова—Чăваш АССР Суту-илӳ Халăх Комиссариачĕн организациллĕ отделĕн начальникне.

92. Николай Иванович Юдина—Пăрачкав райпотребсоюзĕн главнăй бухгалтерне.

93. Аркадий Аполонович Яковлева — Чăваш АССР Суту-илӳ Халăх Комиссариачĕн подсобнăй хуçалăх енĕпе ĕçлекен отделĕн экономистне.

94. Матвей Ананьевич Яшина—Пăрачкав районĕнчи Козловкăри ялпо председательне.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ **З. АНДРЕЕВА.**

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ **А. ИЗМАЙЛОВ.**

Шупашкар хули, 1945 çулхи апрелĕн 12-мĕшĕ.

* * *

Авиацин Главнăй Маршалне А. А. Новикова тата Н. С. Хрущева орденсем пани

Майăн 21-мĕшĕнче СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕн Пĕрремĕш Заместителĕ **Н. М. Шверник** юлташ авиацин Главнăй Маршалне А. А. Новикова ăна Совет Союзĕн Геройĕ ятне пани çинчен калакан грамотăпа пĕрле Ленин орденĕ тата «Ылттăн Çăлтăр» медаль панă. Ăна нимĕç захватчикĕсене хирĕç пынă кĕрешӳ фронтĕнче Верховный Главнокомандованин боевой заданийĕсене кăтартуллăн пурнăçа кĕртнĕшĕн тата çавăн чухне хастарлăхпа паттăрлăх кăтартнăшăн наградăланă. Ăпах Хĕрлĕ Çарта нумай çул хушши лайăх ĕçлесе тăнăшăн Ленин орденĕ панă.

Н. С. Хрущев юлташа Украинăра партизансен юхăмне йĕркелес тĕлĕшпе правительство панă заданисене кăтартуллăн пурнăçа кĕртсе пынăшăн тата фашистла нимĕç захватчикĕсене хирĕç пынă кĕрешӳре çитĕнӳсем тунăшăн 1-мĕш степень Суворов орденĕ тата 1944 çулта тырă хатĕрлес тĕлĕшпе государство панă плана ăнăçлăн пурнăçа кĕртсе пынăшăн 1-мĕш степень Отечественнăй вăрçă орденĕ панă. (ТАСС).

И. В. Сталин юлташăн халăха чĕнсе каланине тата Верховный Главнокомандующин Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар Флотне панă приказне уйрăм кĕнеке туса пичетлесе кăларнă

Политика литературин Государство издательстви пĕтĕм халăх праçникĕ кунĕнче—Çĕнтерӳ кунĕнче Сталин юлташ халăха чĕнсе каланине тата Верховный Главнокомандующин 1945 çулхи майăн 9-мĕшĕнче Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар Флотне панă приказне уйрăм кĕнеке туса пичетлесе кăларнă. Пĕтĕмпе 5 миллион кĕнеке тухать. (ТАСС).

ШКУЛСЕНЧИ ЭКЗАМЕНСЕМ

Малтанхи кунăн çитменлĕхĕсене пĕтермелле

ИШЛЕЙ. Майăн 22-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри пур шкулсенче те экзаменсем вăхăтра пуçланчĕç. Ишекри вăтам шкултан вĕренсе тухакансене экзамен тытма Ишлейри вăтам шкула чĕнсе илнĕ. Икĕ шкулăн ачисем пĕр класра экзамен пачĕç.

Малтанхи экзаменра вырăс чĕлхипе сочиненисем çырчĕç. Ку сочиненисем малашнехи экзаменсене татса парассĕ. Çавăнпа кашни вĕренекен сочиненисене тĕплĕ шухăшласа лайăх çырма тăрăшать. Кăтартнă вăхăтра пур вĕренекенсем те хăйсен ĕçĕсене комисси аллине пачĕç. Комисси сочиненисене тĕплĕн тĕрĕслесе тухрĕ, кашни ачан ĕçне тивĕçлипе хакларĕ. Калас пулать, малтанхи кунăн итогĕсене мухтамалла мар. 30 ачаран «пиллĕк» паллă илекен пĕрре те пулмарĕ. Виçĕ ача «тăваттă» (Ишлей шкулĕнчен—2, Ишекрен 1 ача) паллă илнĕ. 23 сочинение «виççĕ» паллăпа хакланă. 3 вĕренекенĕн ĕçне «иккĕ» паллăпа тата 1 ачан ĕçне «пĕрре» паллăпа хакланă. Çапла вара, экзаменсем ирттермелли инструкци тăрăх, 4 вĕренекене (пурте Ишлейри вăтам шкултан) малашнехи экзаменсене кĕртмеççĕ.

Районра ытти шкулсенче те пысăк çитменлĕхсем пурри палăрать. Кипечкассинчи 7 çул вĕренмелли шкулти IV-мĕш класра 22 вĕренекенрен вырăс чĕлхипе 16 ача экзамен парайман. Кунта пĕр ача экзамена пачах пыман. Ку класс учителĕ хăйĕн ĕçĕ çине çиелтен пăхнă. Ачасене çирĕп пĕлӳ парассишĕн тăрăшса ĕçлемен. Мăналти 7 çул вĕренмелли шкулти IV-мĕш класра экзамен тытма 4 ача пыман. Экзамена пымасăр юлнă тĕслĕхсем ытти шкулсенче те тĕл пулаççĕ. Ку çитменлĕхсем малашнехи экзаменсенче пулмалла мар.

Энтимĕркассинчи пуçламĕш шкултан кăçал 17 ача вĕренсе тухмалла. Малтанхи экзамена вĕсем пурте лайăх тытнă. 49 çул учитель пулса ĕçлекен П. Сапожников юлташ ачасене юратса вĕрентни курăнать.

Çавăн пекех Ишек вăтам шкулĕнчи IV-мĕш класран вĕренсе тухакансем те малтанхи экзамена ăнăçлă панă. Унта 29 ачаран экзамен тытайманни пулман.

Экзменсене ăнăçлă ирттересси шкул директорĕсемпе заведующисенчен тата учительсенчен нумай килет. Апла пулин те, шкулти комсомол организацийĕсен ку ĕçрен аякра тăмалла мар. Шкул ачисем пурте шкула пымалла тăвас пулать.

Экзамен лайăх иртрĕ

СĔНТĔР, майăн 22-мĕшĕ. (Телефонпа). Пушкăртри çичĕ çул вĕренмелли шкулта (директорĕ Михайлов юлташ) IV-мĕшпе VII-мĕш классенче экзаменсем лайăх иртрĕç. VII-мĕш класра алгебрăпа арифметика тăрăх çыру ĕçĕсем пулчĕç. Ачасем ку предмета юратса вĕренни палăрчĕ. 5 ача «пиллĕк», 6 вĕренекен «тăваттă», ыттисем «виççĕ» паллă илнĕ. Экзамен парайман ачасем кунта пачах пулман.

IV-мĕш класран 13 ача вĕренсе тухмалла. Вырăс чĕлхипе çыру ĕçĕсем тăрăх экзаменра 4 ача «пиллĕк», 2 вĕренекен «тăваттă», ыттисем «виççĕ» паллă илнĕ. Экзамен парайман ачасем ку класра та пулман. Вĕренекенсем хăйсен ĕçĕсене вăхăтченех çырса парассĕ, пур енĕпе те дисциплинăллă пулни, вĕреннĕ материала лайăх пĕлни курăнать.

Шкул экзамена лайăх хатĕрленнĕ. Ашшĕ-амăшĕсен пухăвне ирттернĕ. Экзамен тытакансене вĕри апат çитерме колхоз продуктсем уйăрса панă. Ачасем экзаменсене хăюллă та савăнăçлă пыраççĕ.

Г. МОИСЕЕВ.

ВЛКСМ Обкомĕнче

Çамрăксен пысăк тухăçлă кок-сагыз туса илес тĕлĕшпе ĕçлекен звенисен ăмăртăвне ирттересси çинчен

ВЛКСМ Обкомĕ комсомол райкомĕсен ыйтнипе çамрăксен пысăк тухăçлă кок-сагыз туса илес тĕлĕшпе ĕçлекен звенисен ăмăртăвне кăçал та ирттерме йышăннă.

Ăмăртăва кок-сагыз туса илес тĕлĕшпе ĕçлекен çамрăксен пур звенисем те хутшăнма пултараççĕ. Ăмăртура мала тухмашкăн кок-сагыз акса ăна лайăх пăхса ӳстерес тĕлĕшпе пур агротехникăллă мероприятисене те пурнăçламалла, бригадăна çирĕплетсе панă участок çинче кок-сагыз тымарне тата вăррине ытларах туса илмелле.

ВЛКСМ Обкомĕ комсомол райкомĕсемпе пуçламĕш организацисене пысăк тухăçлă кок-сагыз туса илес тĕлĕшпе ĕçлекен звеносен социализмлă ăмăртăвĕн условийĕсене пур комсомолецсемпе союзра тăман çамрăксене те ăнлантарса пама, ăмăртăва бригадăсемпе звеносене, комсомолецсемпе çамрăксене анлăн явăçтарма хушнă.

Мала тухнă бригадăсемпе звеносене тата уйрăм комсомолецсемпе çамрăксене укçан премипе тата хаклă парнесем парасçĕ.

Республикăри промышленноçпа транспорт предприятийĕсенчи çамрăксен бригадисен социализмлă ăмăртăвĕн 1945 çулхи апрель уйăхĕнчи итогĕсем

ВЛКСМ Чăваш Обкомĕ, республикăри промышленноçпа транспорт предприятийĕсенчи çамрăксен бригадисен социализмлă ăмăртăвĕн 1945 çулхи апрель уйăхĕнчи итогĕсене пăхса тухса, çаксем мала тухнине палăртнă:

Пĕрремĕш вырăна Коган юлташ ВЛКСМ Центральный Комитечĕн комсоргĕ пулса ĕçлекен заводри Колесниковăн бригади йышăннă. Вăл бригадăна ВЛКСМ Обкомĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне памалла тунă.

Апрель уйăхĕнче çамрăксен çак бригадисем лайăх ĕçленине палăртнă: Соловьева юлташ ВЛКСМ Центральный Комитечĕн комсоргĕ пулса ĕçлекен заводри Колотилина, Гаврилина, Берехастов юлташсен бригадисем, Коган юлташ ВЛКСМ Центральный Комитечĕн комсоргĕ пулса ĕçлекен заводри Сухина, Романова, Федорова, Анокина юлташсен бригадисем тата Шереметьев юлташ ВЛКСМ Центральный Комитечĕн комсоргĕ пулса ĕçлекен заводри Емелина, Порфирьева, Пастухова, Амерханова, Рудакова юлташсен бригадисем.

РЕСПУБЛИКĂРИ КОЛХОЗСЕНЧЕ МАЙĂН 20-МĔШĔ ТĔЛНЕ КĔСРЕСЕНЕ ЧУПТАРАС ĔÇ МĔНЛЕ ПЫНИНЕ КАТАРТАКАН

СВОДКА

Районсем	Чуптарнă (процентпа)
Октябрьски	85,1
Улатăр	74,5
Вăрнар	72,5
Пăрачкав	72,0
Ишлей	70,6
Чкаловски	67,2
Красноармейски	67,0
Тăвай	65,1
Первомайски	61,7
Чурачăк	60,0
Кувакино	60,0
Шăмăршă	59,2
Сĕмĕрле	58,8
Йĕпреç	58,4
Сĕнтĕрвăрри	57,6
Советски	52,6
Куславкка	52,5
Елчĕк	51,8
Çĕрпӳ	50,4
Сĕнтĕр	49,6
Етĕрне	49,2
Комсомольски	45,6
Элĕк	44,4
Шăхасан	40,6
Хĕрлĕ Чутай	38,1
Муркаш	37,7
Шупашкар	36,6
Канаш	34,0
Вăрмар	29,0
Калинино	24,4

Искусственнăй майпа пĕтĕлентереççĕ

Муркаш районĕнчи Шетмепуç ял Советне кĕрекен «Çĕнĕ Хунав» колхозра кĕсресене искусственнăй майпа пĕтĕлентермелли пункт ĕçлет. Çак пункт çумне 4 ял Советĕнчи колхозсен кĕсрисене çирĕплетнĕ. Пункт заведующийĕ пулса ĕçлекен Я. Семенов юлташ хăйĕн ĕçне лайăх пĕлет. Иртнĕ çул искусственнăй майпа пĕтĕлентерсе «Çĕнĕ Хунав» колхозра 15 кĕсререн 15 тиха илнĕ. Искусственнăй майпа пĕтĕлентересси кăçал та ăнăçлă пырать. Пунктри ăйăра ватă колхозник В. Иванов пăхать. Ăйăр планах таса татă мантăр. Пункт çумне çирĕплетнĕ кĕсресем килес çул пурте тиха туса парасса колхозниксем шансах тăраççĕ.

Б. ЯКОВЛЕВ.

Чăх-чĕп ĕрчетессишĕн тăрăшмаççĕ

Красноармейски районри «Большевик» колхозра 1941 çулта чăх-чĕп ферми организациленĕ. Малтанлăха ферма 35 чăх илнĕ. Ун хыççăн кашни çулах 40—50 чĕпĕрен кая мар пусарса кăларнă. Чăх-чĕп шучĕ начар пăхнине пула чакса пырать. Юлашки вăхăтра кăна 6 чăх пĕтнĕ. Кунта ферма турăмăр тесе йышăннă та унтан чăхсем çинчен манса кайнă. Вĕсене пăхма ответлă çынсем те уйăрман, çавăн пекех уйрăм çуртйĕр те паман. Çапла вара ферма хут çинче кăна юлнă.

Г. ЗАХАРОВ.

Совет Союзĕпе Дани хушшинче çĕнĕрен дипломатиллĕ çыхăну пуçланса кайни

Дание ирĕке кăларнă хыççăн тунă çĕнĕ правительство майăн 10-мĕшĕнче Совет правительствинчен пĕр-пĕрин патне посланниксем яма ыйтнă. Çавăнпа пĕрлех Данин Совет Союзĕнчи чрезвычайнăй посланникĕ тата полномочнăй министрĕ пулса ĕçлеме Дессинг господина яма шутлани çинчен пĕлтернĕ.

Майăн 16-мĕшĕнче Совет правительстви Дани правительствине çапла пĕлтернĕ: Дани правительстви икĕ çĕршыв хушшинчи çыхăнăва çĕнĕрен пуçласа яма сĕннине Совет правительстви çапла хаклать: çак сĕнӳ—Данин кивĕ правительстви 1941 çулхи июнь уйăхĕнче гитлерла Германи Совет Союзне тапăннă кун. Совет Союзĕпе Дани хушшинчи дипломатиллĕ çыхăнăва пĕтерсе хунипе çĕнĕ правительство сивленине пĕлтерет, тесе шутлать. Çапла шутласа, Совет правительстви Данин çĕнĕ правительстви сĕннипе килĕшет, тенĕ. Çакăнпа пĕр вăхăтрах Совет правительстви Дани правительствине Т. Дессинг господина Данин Совет Союзĕнчи чрезвычайнăй посланникĕ тата полномочнăй министрĕ тунипе килĕшни çинчен пĕлтернĕ.

(ТАСС).

Германие çĕнтернĕ ятпа Варшавари посольствăра пулса иртнĕ йышăну

ВАРШАВА, майăн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Совет Союзĕн Польшăри Посолĕ В. З. Лебедев тата Совет Союзĕн Польшăри Çар Миссийĕн Начальникĕ С. С. Шатилов генерал-лейтенант майăн 19-мĕшĕнче Германие çĕнтернĕ ятпа йышăну туса ирттернĕ. Йышăнура çаксем пулнă: Польша Халăх Совечĕн Президенчĕ Берут, Польша Премьер-Министрĕ Э. Осубка-Моравский, Чехословаки Посланникĕ Гейрет, Франци республикин представителĕ Гарро, Польша республикин Вăхăтлăх Правительствин министрĕсем, çавăн пекех тата Хĕрлĕ Çарпа Польша çарĕн генералĕсемпе офицерĕсем, общество, культура тата политика деятелĕсем, католиксен тата православнăй чиркĕвĕн представителĕсем пулнă.

Фашистла нимĕç захватчикĕсене çĕнтерни пирки савăнса, йышăну питех те ăшшăн та туслă пулса иртнĕ.

ХĔРЛĔ ÇАРĂН НИМĔÇ ЗАХВАТЧИКĔСЕМПЕ ÇАПĂÇСА ВИЛНĔ БОЕЦĔСЕНЕ ВЕНГЕРСЕН ПЕЧ ХУЛИНЧЕ ПАМЯТНИК ЛАРТНĂ

БУХАРЕСТ, майăн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Румынири радио çапла пĕлтерет: венгерсен Печ хулинче пурăнакан халăх Хĕрлĕ Çарăн нимĕç захватчикĕсемпе çапăçса вилнĕ боецĕсене питĕ кĕрнеклĕ памятник лартнă. Памятника питĕ чаплă праçник туса уçнă. Хĕрлĕ Çарăн Печ хулине ирĕке кăларнă соединенийĕн представителĕ сăмах тухса каланă. Баранья провинцийĕн руководителĕ Венгри правительствипе Печ хулинчи халăх ячĕпе Венгрие фашистла оккупантсенчен ирĕке кăларнăшăн Хĕрлĕ Çара тав тунă.

ИСТРИЕ ИРĔКЕ КĂЛАРНĂ ЯТПА ПОЛĂРА ПУЛСА ИРТНĔ УЯВ

БЕЛГРАД, майăн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Белградри радио çапла пĕлтерет: Истрие ирĕке кăларнă ятпа Полăра пысăк уяв пулса иртнĕ. Уява Истрире пурăнакан хорватсемпе итальянецсем 30.000 çын ытла хутшăннă. Пур районсенчен те унта халăх ялавсемпе, плакатсемпе килсе тулнă. Демонстрантсем юрăсем юрланă, Тито маршала, федеральнăй Хорватин правительствине, демократиллĕ федерациллĕ Югославин правительствине тата Югославин çарне саламланă. Уявра Истрин Владимир Горт ертсе пынă мухтавлă бригадин парачĕ пулса иртнĕ. Çакна асăрхаттармалла: Итали авиацийĕ пирĕн килĕшӳлĕхпе хаваслăха пăсма пикенет, çапла вăл Истрири хорватсен тăшманĕ пек çеç мар, çавăн пекех тата Истрире пурăнакан ирĕклĕхе юратакан итальянецсен тăшманĕ пек те ĕçлет.

РУМЫНСЕН 38 ВĂРÇĂ ПРЕСТУПНИКНЕ СУД ТУНИ

БУХАРЕСТ, майăн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Румынсен 38 вăрçă преступникĕн судĕнче майăн 18-мĕшĕнче свидетельсенчен ыйтса пĕтернĕ. Каçхи ларура общество айăплаканĕ Бунăчăну тухса каланă. Вăл 4 сехет хушши каланă. Вăл çак айăпланакансене—Мачича, Трестиорянуна, Никулескуна, Изопескуна, Ионескуна, Балачануна, Калатескуна, Маринес куна; Падурене, Манескуна, Малинескуна, Бобея, Кристинуна, Амбуша, Ландауна вăрçă преступникĕсене айăплас тĕлĕшпе кăларнă законăн 3-мĕш статьи тăрăх айăплама ыйтнă. Çав статья айăпланакансене вĕлерме е ĕмĕрлĕхе каторгăна яма хушать.

Майăн 19-мĕшĕнче ирхи ларура общество айăплаканĕ Сараку пысăк сăмах тухса каланă. Вăл ытти айăпланакансене те малта асăннă законăн 3-мĕш статьи тăрăхах айăплама ыйтнă.

Перерыв хыççăн защитниксем калама пуçланă.

ТОЛЬЯТТИ СОЮЗНИКСЕН МИЛАНРИ ÇАР АДМИНИСТРАЦИЙĔН ПУÇЛĂХĔПЕ КАЛАÇНИ ÇИНЧЕН РИМРИ ХАÇАТСЕМ МĔН ÇЫРАÇÇĔ

РИМ, майăн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Римри хаçатсем çапла пĕлтереççĕ: майăн 17-мĕшĕнче Милана çитнĕ Тольятти тепĕр кунне союзниксен хулари çар администрацийне ертсе пыракан генерал патне пынă. Вăл унран массăллă партисен руководителĕсене ĕççыннисен митингĕсемпе пухăвĕсенче сăмахсем тухса калама ирĕк пама ыйтнă. Тольятти çапла кăтартса панă: пухусем тума чарни рабочисене тата пĕтĕм халăха тарăхтарать, тенĕ. Ăна хирĕç генерал собранисене ирттерме союзниксен çӳлти влаçĕсем чарнă, тесе ăнлантарса панă.

ИСПАНИРИ КОНЦЕНТРАЦИЛЛĔ ЛАГЕРЬСЕНЧИ АНТИФАШИСТСЕН ЙЫВĂР ПУРНĂÇĔ

НЬЮ-ЙОРК, майăн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, концентрациллĕ лагерьсене хупнисене пулăшу парас тĕлĕшпе ĕçлекен ют çĕршыври организацин членĕ, Испанири концлагерьсене тĕрĕслесе тухнă хыççăн, çапла пĕлтернĕ: унти лагерьсенче фашизма хирĕç кĕрешнĕ поляксем, австриецсем, французсем, итальянецсем тата ыттисем те нумай лараççĕ. Унăн сăмахĕ тăрăх, лагерьти пурнăç условийĕсем çав тери начар. Ласка ятлă вырăнти паллă лагерьте Испанин нацистсем майлă хуралçисем лагерьте ларакансене асаплантара-асаплантара вĕлереççĕ.

Франко правительствин юстици министрĕ Аунос çапла пĕлтернĕ: юстици министерстви аллинче политика тĕлĕшĕпе айăпласа хупнă 18.000 çын ларать. Ыттисем çаплах фалангăн специальнăй полицийĕ, шалти ĕçсен министерстви тата çар полицийĕ аллинчех тăраççĕ.

Агентство пĕлтернĕ тăрăх, Испанире фашизма хирĕç кĕрешнĕ çынсене халĕ те вĕлерме чарăнман.

ГИТЛЕРЛА АГЕНТСЕН АРГЕНТИНĂРИ ĔÇĔСЕМ

НЬЮ-ЙОРК, майăн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Эллайд Лейбор Ньюс агентствин корреспонденчĕ Монтевидеоран (Уругвайран) çапла пĕлтерет: Германин тĕп шпионĕсем Аргентинăра хăйсен ĕçĕсене нимĕн чăрмавсăрах туса пыраççĕ. Корреспондент çапла çырать: хальхи вăхăтра Аргентинăра пытанса пурăнакан вăрçă преступникĕсем хушшинче нацистсен шпионĕсен руководителĕ граф Карл фон Люксбург, Дениц адмиралăн çывăх помощникĕ пулнăскер, тата Германин «ĕç фрончĕ» текен организаци руководителĕн Лейăн помощникĕсенчен пĕри Рихард Шредер пур. Люксбургпа Шредер Аргентинăра нумаях пулмасть çитнĕ пулмалла. Аргентинăра пынă ытти нацистсем хушшинче Вальтер Вилькенинг тата Вилли Шекенбах гестаповецсем пур.

Оверсис Ньюс агентствин корреспонденчĕ Монтевидеоран çапла пĕлтерет: Буэнос-Айресран илнĕ сведенисем тăрăх, Аргентинăра политикăллă оппозици ӳссе пырать. Радикальнăй парти правительствăна демагогиллĕ фалангистла режим тунăшăн айăплать. Кордоба провинцин губернаторĕ Диас Сиснерос, правительствăна пусмăрлăх меточĕсемпе усă курнăшăн айăпласа, вырăнтан тухнă.

БОЛГАРИРЕ АСЛĂ ХУÇАЛĂХ СОВЕЧĔ ТУНИ

СОФИЯ, майăн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Болгарири радио пĕлтернĕ тăрăх, министрсен совечĕ çумĕнче аслă хуçалăх совечĕ тăваççĕ. Çав советăн задачи—государство предприятийĕсемпе организацийĕсен, çавăн пекех тата уйрăм çынсемпе общество предприятийĕсен хуçалăх ĕçĕсене планласси, йĕркелесси тата асăрхаса тăрасси пулать.

ДЕ БРИНОНА ТЫТСА ХУПНИ

ЛОНДОН, майăн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви Парижран пĕлтернĕ тăрăх, Ферман де Бринона, унăн арăмне тата Петэн врачĕ пулнă Менестреле тытса хупнă. Де Бринон хăй вăхăтĕнче «Наци интересĕсене хӳтĕлекен комитетăн» председателĕ пулса ĕçленĕ. Çав комитет вăл «пиллĕкмĕш колоннăн» центрĕ пулнă. Виши «правительстви» де Бринона нимĕçсен Парижри çар управленийĕн руководителĕ патне хăйĕн представителĕ пулса ĕçлеме янă. Менестрелĕн ашшĕ те Петэн врачĕ пулса ĕçленĕ. Менестрель нимĕç оккупанчĕсемпе килĕшсе ĕçлессишĕн хытă тăрăшакансенчен пĕри пулнă.

Лейбористсен партийĕн Блэкпулри конференцийĕ

ЛОНДОН, майăн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: лейбористсен партийĕн Блэкпулра майăн 21-мĕшĕнче уçăлакан конференцине премьер-министр заместителĕ Эттли пынă, вăл Черчилль премьер-министрăн лейбористсен партийĕн руководствине пама çырнă çырăвне илсе пынă. Эттли тата Бевин лейбористсен партийĕн исполнительнăй комитетне çакăн çинчен пĕлтерĕç, тесе шутлаççĕ: Черчилль лейбористсен партине Японие хирĕç пыракан вăрçă вĕçлениччен тата хальхи вăхăтра йывăр тапхăр пĕтиччен коалициллĕ правительствăрах юлма сĕнет. Лейбористсем çакăнпа килĕшмесен, премьер-министр парламента халех салатса яма тата июль уйăхĕн иккĕмĕш çурринчен суйлав ирттерме сĕнет.

Çакă паллă: правительство членĕсем Эттли тата Бевин лейбористсем премьер-министрăн çав сĕнĕвне йышăнаççĕ. Шалти ĕçсен тата шалти хăрушсăрлăх министрĕ Моррисон тата лейбористсен партийĕн пĕтĕм руководстви çав сĕнĕве хирĕç тăраççĕ. Вĕсем правительствăра хальхи парламентăн полномочи срокĕ тухиччен (октябрь уйăхĕччен) юлма сĕнеççĕ, çавăн хыççăн вара суйлав ирттермелле, теççĕ; суйлава васкаса, июль уйăхĕнчех ирттерессипе килĕшмеççĕ.

ЛОНДОН, майăн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, майăн 20-мĕшĕнче лейбористсен партийĕн исполнительнăй комитечĕ Черчилль Японие хирĕç пыракан вăрçă пĕтиччен коалицире юлма сĕннине сирсе янă.

ЛОНДОН, майăн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, паян Блэкпул хулинче лейбористсен партийĕн конференцийĕ уçăлнă. Конференцире 1.100 делегат. Конференцие парти председателĕ Эллен Вилкинсон уçнă. Вăл çапла каланă: премьер-министр лейбористсене коалициллĕ правительствăра юлма е чи çывăх вăхăтрах парламента çĕнĕрен суйлассипе килĕшме сĕннине—ыйтăва çавăн пек лартнине лейбористсен партийĕн руководстви йышăнчĕ, тенĕ.

Лейбористсен партийĕн лидерĕсем çапла калаççĕ: суйлава июль уйăхĕнче ирттерес марччĕ, çартан яракан çынсем киле таврăниччен кĕтсе тăрсан лайăхрах пулĕ, теççĕ. Вилкинсон лейбористсене коалициллĕ правительствăран ытла васкамасăр тухма, суйлава кĕркунне ирттерме сĕннĕ. Премьер-министрăн политикăллă советникĕсене асра тытса, Вилкинсон «партишĕн хăйшăн çеç усă пултăр тесе васкаса суйлав ирттерме» хăтланнине сивленĕ. Анчах та çакна йышăнмасăр малашне те правительствăра юлмалла пулать пулсан, лейбористсем малтанхине суйласа илме хатĕр, тенĕ.

«Çакă питех те паллă,—тенĕ Вилкинсон:—реконструкцин тĕп задачине пурнăçлас ĕçре эпир консерваторсемпе пĕрле ĕçлеме пултараймастпăр».

ЛОНДОН, майăн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: премьер-министр коалицие сыхласа хăварма сĕннине лейбористсен партийĕн исполнительнăй комитечĕ сирсе яма йышăннине конференци делегачĕсем пĕрсаслăн ырланă. Каçхи хупă ларура Эттли исполнительнăй комитетăн Черчилле ямалли ответĕн проектне вуласа панă. Икĕ сехет хушши ытла калаçнă хыççăн, конференци исполнительнăй комитета Черчилле кирлĕ пек ответлеме ирĕк панă. Çав ответа лейбористсен партийĕн исполнительнăй комитечĕн паян каçхине пухăнакан чрезвычайнăй ларăвĕнче çырса хатĕрлемелле.

АМЕРИКĂРИ ПĔРЛЕШӲЛЛĔ ШТАТСЕНЧИ ПРОМЫШЛЕННОÇРА ĔÇЛЕКЕН РАБОЧИСЕН ХИСЕПĔ ЧАКНИ

НЬЮ-ЙОРК, майăн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен ĕç министерстви пĕлтернĕ тăрăх, Пĕрлешӳллĕ Штатсенчи промышленноçра ĕçлекен рабочисен хисепĕ кăçалхи апрель уйăхĕнче 1.140 пин çын чакнă, урăхла каласан, 1944 çулхи апрель уйăхĕнчипе танлаштарсан, 8 процент сахалтарах пулнă. Кăçалхи март уйăхĕн иккĕмĕш çурринчен пуçласа апрель уйăхĕн иккĕмĕш çуррине çитиччен промышленноçран 275 пин рабочие кăларса янă. Пуринчен ытларах рабочисене хурçă шăратакан, тимĕр тăвакан, автомобиль, авиаци тата карапсем тăвакан заводсенчен кăларса янă.

Ĕç министрĕ каланă тăрăх, рабочисен хисепĕ çар заказĕсене чакарнă пирки, пуринчен ытларах карапсем тăвакан промышленноçри заказсене чакарнă пирки тата авиаци промышленноçĕнчи заказсене пăрахăçа кăларнă пирки чакса пырать. Суту-илӳ министерствин статистика бюровĕ пĕлтернĕ тăрăх, кăçалхи апрель уйăхĕнче Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсенче 770 пин рабочи ĕçсĕр пулнă. Вăл хисепĕн виççĕмĕш пайĕ çеç пĕр уйăх ытларах ĕçсĕр пурăннă. Ассошиэйтед пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, ĕç резервĕсене мобилизацилес тĕлĕшпе ĕçлекен управленин руководителĕ Макнатт çапла каласа панă: рабочисен чылай пысăк пайне вăрçă промышленноçĕнчен кăларса янă пирки тата салтаксем çартан таврăннă пирки, ĕç шыраса тупса паракан бюросен шучĕ чылаях нумайланмалла. Халĕ çавнашкал бюросем 1.407 пур. Татах 696 бюро уçма палăртнă. Март уйăхĕнче промышленноçа 972 пин рабочи, вăл шутран 312 пин хĕрарăм янă.

Лăпкă океан çинчи вăрçă

ЛОНДОН, майăн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, союзниксен Лăпкă океанăн кăнтăр-хĕвеланăç пайĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен пĕрлешӳллĕ командованийĕн штабĕ пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă: Минданао тата Лусон утравĕсем çинче Америка çарĕсем çапăçса малалла куçса пыраççĕ. Таракан ятлă утрав çинче американецсен чаçĕсем çав утрава Япони çарĕсенчен тасатса пынă.

Союзниксен бомбардировочнăй авиацийĕ Японин Формоза утравĕ çинчи промышленность объекчĕсене тапăннă. Союзниксен самолечĕсем Формоза утравĕ хĕрринче японецсен виçĕ транспортран тата икĕ грузовой суднăран тăракан караванне шыва путарнă.

ВАШИНГТОН, майăн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен Лăпкă океан çинчи флочĕн штабĕ çапла пĕлтерет: Окинава утравĕн кăнтăр пайĕнче Америка çарĕсем, японецсем вăйлă хирĕç тăнине çĕнтерсе пырса, малалла куçнă; Японин Сури крепоçне çавăрса илнĕ.

Америка самолечĕсем Корея çыранĕсем патĕнче Японин пĕр вăтам грузовой суднине шыва путарнă.

ЯПОНИ САМОЛЕЧĔ «ФРАНКЛИН» АВИАНОСЕЦА ТАПĂННИ

НЬЮ-ЙОРК, майăн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен тинĕс министерстви çапла пĕлтернĕ: майăн 19-мĕшĕнче японецсен пикировка тăвакан бомбардировщикĕ Япони çыранĕнчен 16 мильăра 27.000 тонна таякан «Франклин» авианосеца атакăланă. Бомбăсем икĕ хутчен тӳрех пырса тивнине пула авианосец çинче пулнă боеприпассем пурте сурăлса кайнă. Авианосец çинче 341 çын вилнĕ, 431 çын пĕр хыпарсăр пĕтнĕ, 300 çын ытла аманнă. Кун пек йывăр çухату тӳснĕ карап американецсен кун таранччен пулман. Авианосец командине сывă тăрса юлнă пайĕ çав тери паттăрла ĕçленине пула, «Франклина» шыва путма паман, вара вăл хăех ишсе пырса Бруклина çитнĕ.

ГИТЛЕРОВЕЦСЕМ ÇАРАТНĂ ХАКЛĂ ЯПАЛАСЕН ПЫСĂК КОЛЛЕКЦИЙĔСЕНЕ ТУПНĂ

НЬЮ-ЙОРК, майăн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Юнайтед пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Америкăн 7-мĕш армийĕн офицерĕсем гитлеровецсем Совет Союзĕнче тата ытти çĕршывсенче çаратса пухнă искусство произведенийĕсен 4 пысăк коллекцине тупнă. Пĕр коллекцине Австрири Альп тăвĕсенчи вăрăм тоннельре, теприне—Баварири замоксенчен пĕринче, виççĕмĕшне—Мимминген çывăхĕнчи монастырьте (Баварире) тупнă. Юлашки коллекцире Киеври музейрен вăрласа кайнă тĕрлĕрен хаклă япаласем нумай пулнă. Баварире Совет Союзĕнчен тата Францирен вăрласа пынă 300 художествăллă произведени тупнă.

ШЕРНЕР ФЕЛЬДМАРШАЛА ТЫТКĂНА ИЛНĔ

ЛОНДОН, майăн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Лондонри радио пĕлтернĕ тăрăх, Германи парăнасси çинчен калакан акта алă пуснă хыççăн та хăйĕн çарĕсене совет çарĕсене хирĕç тăма хушнă нимĕç фельдмаршалĕ Шернер американецсен 7-мĕш армине тыткăна парăннă. Çав Шернер Чехословакирен Австрие самолетпа вĕçсе тарнă.

АЛЬФРЕД РОЗЕНБЕРГА ТЫТСА ХУПНĂ

ЛОНДОН, майăн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Лондонри радио пĕлтернĕ тăрăх, Альфред Розенберг союзниксен аллине лекнĕ. Ĕнер Гитлер шайкин çак паллă деятельне Америка влаçĕсем Фленсбург хулинчи больницăра тупнă. Ăна çавăнтах арестленĕ те тĕрмене хупса лартнă.

КĔСКЕН

● Черногори столицин Цетинье хулин çар округĕнчи çар сучĕ нимĕçсем пуçпуласа тăнă вăхăтра вĕсем майлă ĕçлесе ответлă вырăнсем йышăннă 12 çынна персе пăрахмалла суд тунă.

● Норвегире Стокгольм хулинче Квислинг майлă ĕçлесе тăнă чи паллă çынсенчен пĕрне Хильдича арестленĕ, çавăн пекех тата Квислинг «министерствинче» снабжени «министрĕ» пулнă Виста тата суту-илӳ «министрĕ» пулнă Блера тытса хупнă. (ТАСС).

СССР-ти Совет писателĕсен Союзĕн Правленийĕ вырăссен питĕ чаплă писателĕ, ĕççынни депутачĕсен Мускав Совечĕн депутачĕ, Совет писателĕсен Союзĕн Правлени членĕ Константин Андреевич Тренев вилни çинчен хурланса пĕлтерет.

Ответлă редактор **В. Я. ЯКОВЛЕВ.**

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместителĕн — 2—89, секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн 3—37, промышленность пайĕн — 3—99, ялхуçалăх пайĕн — 3—99, издательство конторин — 0—23.

НТ 00348

Типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР Заказ № 2. Тираж 10.000